**Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсем**

# Экономика преступленийĕсем пирки

***2009 çул хыçа юлнă май çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчех иртнĕ тапхăрти ĕçсене тишкерсе хакласси вăй илсе пырать. Ăна тивĕçлĕ туса ирттерни вара умри тĕллевсене уçăмлатать, çĕнĕ чикĕсене палăртать. Çакна тĕпе хурса Чăваш Енри тăватă района – Муркаш, Етĕрне, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай – пăхса тăракан экономика преступленийĕсене тăвассине хирĕç кĕрешекен оперативлă шырав пайĕн пуçлăхĕпе Игорь Михайлович ИЛЛАРИОНОВПА тĕл пултăмăр, вĕсен ĕçĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарма ыйтрăмăр.***

– Сирĕн тĕллевĕрпе килĕшетĕп. Асăннă 4 района эпир саккăрăн пăхса-тĕрĕслесе тăратпăр. Практика çакна кăтартса парать: юлашки çулсенче çынсем экономика тĕлĕшпе тăвакан преступленисем йышланчĕç. Пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ ĕçсĕрлĕх шайне ÿстерни те, предприяти-организацисен харпăрлăх прависене улăштарни-çĕнетни те, çак пăтрашуллă вăхăтра «пулă тытса юлас» текенсем нумайланни те пĕтĕмĕшле лару-тăру çине ырă мар витĕм кÿрессĕ. Çапла вара – юлашки çулсенче экономика тĕлĕшпе тăвакан преступленисен хисепĕ те палăрмаллах ÿсрĕ. Пирĕн тĕллев вара коррупципе кĕрешесси тата должноçри çынсем хăйсен ĕç вырăнĕпе усă курса преступлени тунине тăрă шыв çине кăларасси.

**– Игорь Михайлович, Сирĕн сăмахсене хисепсем çине куçарсан куç умне мĕнле ÿкерчĕк тухать?**

– Каларăм ĕнтĕ, преступленисен хисепĕ ÿсрĕ. Эпир пăхса тăракан 4 районпа илсен, пĕлтĕр пирĕн сотрудниксем пĕтĕмпе 170 преступлени уçса пачĕç. Танлаштарма, 2008 çулта асăннă районсенче экономика тĕлĕшпе 113 преступлени пулнăччĕ. Преступленисен ÿсĕмĕ куç умĕнчех.

**– Хамăр района, уйрăммăн илсен, мĕнпе тĕл пулатпăр-ха? Муркаш енре йăлтах лăпкă теме пулать-и?**

– Юрăри пек каласан, пирĕн лăпкăлăх тĕлĕкре кăна. Апла пулин те танлаштаруллă хисепсемпе пăхсан... Эпĕ мĕн калассине хăвăрах шутласа пăхăр. Акă пĕлтĕр 4 районта экономикăпа çыхăннă 170 преступление тăрă шыв çине кăлартăмăр пулсан, Муркаш районĕнче – 25 преступление. Çак кăтартусене виçĕм çулхипе пăхсан-танлаштарсан çакă курăнать: ун чух пĕтĕмпе 113 преступлени пулнă пулсан, пирĕн районта кунашкал тĕслĕхсем 33 пулнăччĕ. Хисеп чакни лайăх темелле, анчах коррупцие тата должноçри çынсем хăйсен ĕç вырăнĕпе усă курса преступлени тунине иртнĕ çул эпир Муркаш районĕнче пуринчен те ытларах тупса палăртрăмăр: пĕтĕмĕшле 33 тĕслĕхрен 18-шĕ пирĕн районта вырăн тупрĕ. Виçĕм çул та пĕтĕмĕшле хисеп 33-ччĕ, анчах Муркаш енре ун чух çакăн евĕр 12 преступлени çеç пулнăччĕ. Çак хисепсем хăйсемех пĕтĕмĕшле лару-тăрăва уçса парасçĕ тесе шутлатăп. Ку ÿкерчĕкрен кашниййĕнех тивĕçлĕ пĕтĕмлетÿ тумалла.

**– Юлашки вăхăтра айăплавран укçа парса пăрăнас тĕслĕхсем пурри пирки сасхура çÿрет. Сирĕн практикăра кунашкал тĕслĕхсем пĕлтĕр пулчĕç-и тата хăш сферăсенче палăрчĕç вĕсем?**

– Кашни вулавçăна, районта пурăнакан кашни çынна хумхантаракан ыйтăва пуçартăр эсир. Çапла, кунашкал преступленисемпе те тĕл пулма тиврĕ иртнĕ çул. Эпир пăхса тăракан 4 районта кун пек тĕслĕхсемпе пĕлтĕр 5 уголовнăй ĕç пуçартăмăр пулсан, Муркаш районĕнче кунашкал тĕслĕх 2 пулчĕ (виçĕм çул та çавăн чухлехчĕ). Иккĕшĕнче те йĕрке хуралçисен аллине çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсене протокол çырасран «100 тенкĕ укçа сĕнекен» водительсем лекрĕç.

**– Должноçри çынсем хăйсен ĕç вырăнĕпе усă курса преступлени тунине иртнĕ çул эсир Муркаш районĕнче пуринчен те ытларах тупса палăртрăмăр терĕр. Конкретлăрах ĕçсем пирки каласа хăвараймастăр-ши?**

– Кунта 2009 çулхи чи курăмлă преступленисем пирки каласа хăварас килет. Вĕсен «хуçисем» – Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ертÿçи пулнă С. Митрофанов тата Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ Г. Пайгусов. Пĕрремĕшĕ суя документсем тăратса бюджетран 200 пин тенкĕ ытла укçа вăрланă, иккĕмĕшĕ хăй патшалăх служащийĕ пулнипе усă курса «Чемеево» ял хуçалăх производство кооперативĕн пурлăхне пĕр миллион та 280 пин тенкĕлĕх хăйĕн çине куçарнă.

**– Харпăрлăха хирĕç тунă преступленисем сирĕн уйрăм йĕркепе каяççĕ. Кунти лару-тăру еплерех тата?**

– Чăнах та, кунашкал преступленисене те эпир иккĕмĕш вырăна хăвармастпăр. Иртнĕ çул эпир пăхса тăракан районсенче кунашкал тĕслĕхсем пĕтĕмпе 88 пулчĕç. Вăл шутран иккĕшĕ – Муркаш районĕнче. Виçĕм çулхи кăтартусем: 34 тата 15. 2009 çулта тунă кун евĕр преступленисем тăрăх пĕтĕмпе 15 миллион та 983 пин тенкĕ шыраса илтĕмĕр. 2008 çулхи кăтарту – 11 миллион та 284 пин тенкĕлĕх.

**– Игорь Михайлович, пирĕн калаçăва хутшăннăшăн пысăк тав. Сирĕн тăрăшулăхăр общество аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулни пирки иккĕленÿ çук.**

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

**Афганистана пирĕн çарсене кĕртнĕренпе 30 çул иртрĕ**

# Йывăрлăхсем асран тухмаççĕ

Совет çарĕсене Афганистанри юнлă вăрçăран кăларнăранпа 21 çул çывхарать пулсан, çĕршыв ертÿçисем пирĕн салтаксене унта кĕртнĕренпе Çĕнĕ çул уявĕсем умĕн 30 çул çитрĕ. Çак хурлăхлă куна паллă туса тата унта пуç хунă юлташĕсене, тăванĕсене асăнса районти афганецсем те декабрĕн 26-мĕшĕнче хăйсен обществăлла килне – Калайкассинчи вăтам шкула – пĕр çемье пек пуçтарăнчĕç. Нумай çул иртрĕ унтанпа. Совет салтакĕсене кÿршĕл-лĕ Афганистан Республикинчи вăрçăран кăларнăранпа хыçа юлнă вăхăтра çуралса ÿссе 18 çул тултарнă яшсем те арçын тивĕçне пурнăçласа çар ретне тăчĕç ĕнтĕ...



**1965 çулта çуралнă, 1984-1986 çулсенче действительнăй çар службине Афганистан Республикинче ирттернĕ, çапăçу хирĕнчи паттăрлăхшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тивĕçнĕ Игорь Валерианович Михайлов хăйĕн мăшăрĕпе Римма Петровнапа паян икĕ хĕр ÿстерессĕ.**

– Çĕршыв интересĕсене хÿтĕлесе кÿршĕллĕ Афганистан Республикинчи вăрçăна вунă çул хутшăннă çар подразделенийĕсене унтан 1989 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче кăларчĕç. Вунă çула яхăн тăсăлнă унти вăрçă пирĕн салтаксемпе офицерсемшĕн, салтак амăшĕсемшĕн тинех чарăнчĕ. Салтаксен сăртлă-туллă çĕршыври паттăрлăхĕ вара нихăçан та пирĕн асран тухмĕ, манăçмĕ. Çак вунă çул хушшинче Афганистанри вăрçăра пирĕн çĕршыври – вăл вăхăтри Совет Союзĕнчи – 600 пин ытла каччă вăрçă вутне, анчахрах пĕрле апатланнă юлташсем юн юхтарса пулăшу ыйтнине, вĕсене «вăхăтсăр киле ăсатнине», тăванĕсем куçран шăтарасла пăхнине тÿссе ирттерчĕ, çав ыратăва чĕре витĕр кăларчĕ. Паян та вĕсен çак ырату туйăмĕ сÿрĕлменха. Çакна эпир кашни тĕл пулурах асăрхатпăр. Раççей Федерацийĕн Оборона министерстви пĕлтернĕ тăрăх Афганистан çĕршывĕнче интернационалла тивĕçе пурнăçланă чух тата унта суранланнă хыççăн 14600 çар çынни пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă. Нумайăшĕ хыпарсăр çухалчĕ. Хамăр республикăмăрти 4 каччă Афган моджахечĕсем патĕнче тыткăнра пулчĕ. Çакнашкал çухатусем пире паян та лăпкăлăхра хăвараймаççĕ, – терĕ декабрĕн 26-мĕшĕнче Калайкассинчи вăтам шкулта Афганистан çĕршывне пирĕн çарсене кĕртнĕренпе 30 çул иртнине халалласа ирттернĕ асăну тĕл пулăвне уçнă май районти интернационалист-салтаксен канашĕн ертÿçи В. Киршев.

Пирĕн районтан çавăнти вăрçă вутĕнче 144-ăн пулчĕç, 7-шĕ çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа пуç хучĕ. Тайма пуç вĕсене.

Паян çакă йăлтах иртнĕ вăхăтра ĕнтĕ, анчах воин-интернационалистсем çар çыннисен ырă пуçарăвне – пĕрле пухăнассине – кун йĕркинчен кăларма васкамаççĕ-ха.

... Инçетри лăпкă каç аса илĕç пире,

Бокалсем тултарса шăлса илĕç пите, – шăранать паллă мар автор юрри черетлĕ çапăçăва каякан салтак сассипе. Пурнăçпа вилĕм хушшинчи юлашки утăма тунă чух «Каçарăр мана, юлташ ачасем!» тесе хăйсен куçĕнчен тинкернĕ юлташĕсен ячĕсене çав çапăçуран тасасыва тухнисем самантлăха та манаймаççĕ. Çакăн пек асра юлчĕç Михаил Самойлов, Алексей Татаров, Николай Перцев, Николай Михеев, Александр Порфирьев, Юрий Тарасов, Виталий Николаев ентешсен асĕнче. Мĕн тери йывăр тантăшсене çухатма. Ун пекки никампа та ан пултăр. Вĕсем ял çыннисемпе тăванĕсен, пĕрле выляса ÿснĕ юлташĕсен, Афганистанра пĕрле пулнисен асĕнчен самантлăха та тухмаççĕ.

Çарта пулнă кашни çамрăках хĕсметрен таврăнсан тăван шкула çитсе курма васкать. Икĕ çул каялла кăна-ха ача туйăмлă пулнă паянхи çамрăк арçынсен кăмăлне ăнланма пулать: вĕсем самантлăха пулсан та телейлĕ ачалăх сукмакĕпе утасшăн, иртнине кăмăллăн аса илесшĕн. Афган вăрçинчен таврăннă яшсем çак çулпа пынине пăхма ытла та йывăр.

Юхан шыв леш енчи инçетри вăрçă историе шаларах та шаларах юлса пырать. Унти фронтран Раççее «груз-200», «груз-300» самолетсем те вĕçмеççĕ ĕнтĕ. Анчах мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварасси пĕрлехи ĕç пулнине пирĕн самантлăха та манма юрамасть.



**Районти интернационалист-салтаксене пулăшассинчен айккинче юлман Николай Лазаревич Царев («Передовик» хуçалăх ертÿçи) интернационалист-салтаксен аллинчен «За верность долгу и Отечеству» медале тивĕçрĕ.**



**Интернационалист-салтаксен тĕл пулăвне хутшăннисен пĕр ушкăнĕ Калайкассинчи вăтам шкулти хăйсене халалланă музейри Афган вут-çулăмĕн стенчĕ умĕнче. Мирлĕ ĕçре те парăнмаççĕ интернационалист-салтаксем.**

Тĕл пулăва хутшăннисем интернационалист-салтаксен республикăри канашĕн представителĕсемпе Москакассинчи палăк умне чечек çыххисем хучĕç.

– Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнисем çамрăклах чăтса ирттернĕ йывăрлăхсене пирĕн никамăн та манма юрамасть. Май çитнĕ таран пулăшмалла. Вĕсене манни пирĕн малашлăх çулĕсене хуплать, – терĕ тĕл пулăва хутшăнса «Передовик» хуçалăх ертÿçи Н. Царев.

«...Мĕн чуль иртрĕç унтанпа кунсем, Афганистан тухмасть ман чĕререн. Асран каймасть мана ирхи Кабул, ту хушшинче автомат пенисем...», – Олег Мишуткин гитара çеммипе юрлани асран каймасть.

Юрă шăплăха çурать те астăвăма вăратать...

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

**Раштав уявĕ савăнăçлă иртрĕ**

# Çĕнĕ çул пуриншĕн те çĕнĕ

Мăн Сĕнтĕр райповĕ иртнĕ çул пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăша 220780 пин тенкĕне çитерчĕ. Ку вăл виçĕм çулхинчен пысăкрах кăтарту. Çакна шута илсех-тăр Чăвашпотребсоюз канашĕ 4 çул каялла йăлана кĕртнĕ Раштав елкине январĕн 8-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр райповĕнче ирттерчĕ. «Çакна Мăн Сĕнтĕрсем тивĕç!» – тесе палăртрĕ хăйĕн сăмахĕнче унăн ертÿçи В. Павлов.



**Э. Симакова Хĕл Мучипе Юр Пикерен юлмасть.**



**Никита Волков артист та, сăвăç та.**

– Пирĕн ĕçе çапла хаклани тата пирĕн пайщиксене чыслани пурсăмăра та çĕнĕ хавхаланупа ĕçлеме хистет, – терĕ саламлă сăмахсене хуравласа Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн ертÿçи Л. Майкова.

– Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райповĕсем ăмăртса ĕçлени район аталанăвĕнче курăнать. Ку вара малашлăх çулсене уçать, – палăртрĕ Раштав елкине пухăннă ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене район администрацийĕн экономика пайĕн ертÿçи Э. Симакова.

Мĕн палăртни çак кун ăнăçлă пурнăçланчĕ. Районăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен пырса çитнĕ нумай ачаллă çемьесенчи шăпăрлансем, тăлăх ачасем, сахал тупăшлă çемьесенчен килнисем, пайщиксен ачисем – пурĕ 97 ача – Шупашкарти пуканесен театрĕн «Акăш хурсем» спектаклне тата унтанах килнĕ Хĕл Мучипе Юр Пике вылявне курса пĕрле савăнчĕç. Уяв вĕçĕнче кашниех Çĕнĕ çул парнине тивĕçрĕ.



**Вăкăр çулĕ иртсе кайрĕ.**

**А. БЕЛОВ**
**сăн ÿкерчĕкĕсем.**